Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

## Автор: Давыдов-Анатри Василий Иванович

## Книга: Асатте парни

## Стихотворение: Чухӑнпа таркӑнсем

**(Халӑх юмахӗнчен)**

Пӗр ҫӳллӗ ту хушшинче,
Ҫӑп-ҫут ҫырма юппинче,
Пӗр чухӑн ҫын тертленсе
Пурӑннӑ, тет, эрленсе.
Ҫавах сурӑх усранӑ,
Ӑна питӗ упранӑ.
Пӗрре ҫӳл ту хушшинчен,
Ҫап-ҫут ҫырма хӗрринчен,
Сикнӗ-тухнӑ таркӑнсем,
Вӑрӑ-хурах этемсем.
Самӑр сурӑха курсан,
Пӗр таркӑнӗ, шак хурса,
Калать хайхи чухӑна:
– Пус, тет, халех сурӑхна!
Ҫак ҫын йӑлтах тӗлӗнет:
– Мӗн-ма пусма хушан? – тет, –
Савнӑҫӑм та ҫав ҫеҫ, – тет.
Ман тупрам та ҫав ҫеҫ, – тет.
Таркӑн суйма пикенет:
– Ыран тӗнче пӗтет, тет
Ҫисе юлар виличчен,
Ҫиер умран юличчен…
Чухӑн хытӑ кулянать,
Ним тума та аптӑрать.
Итлет хайхи сӑмаха,
Пусса хурать сурӑха.
Леш таркӑнсем чухӑнран,
Ыр кӑмӑллӑ хуҫаран,
Ахӑлтатса кулаҫҫӗ,
Ун хуйхине туймаҫҫӗ.
Чухӑн ҫакать хуранне,
Ярать сурӑх какайне.
Ахаль кӗтсе тӑриччен,
Кукар ряшки пиҫиччен,
Лешсем шыва чӑмаҫҫӗ,
Тасалмашкӑн шутлаҫҫӗ.
Вут ҫук-ҫке аш пӗҫерме,
Вут ҫук шӳрпе вӗретме.
Ҫук ҫын тӑмаст шутласа,
Тӑмасть пуҫа ҫавӑрса,

Лешсен тумтирĕсене
Хурать вутă вырăнне…
Хуран кĕрет вĕреме,
Пуçлать шур пăс çĕкленме.
Сурăх ашĕ пиçнине,
Кукар яшкин шăршине
Таркăнсем час сисеççĕ,
Вĕçтерсе те çитеççĕ:
– Ăçта пирĕн тумтирсем,
Ăçта пирĕн пушмаксем?! –
Пĕр-пĕрне пӳле-пӳле
Чухăн çынран ыйтаççĕ,
Тăхăнма çуккипеле
Çăвар карса тăраççĕ.
– Сирĕн тумтирĕрсене
Хутăм вутă вырăнне, –
Чухăн калать çаксене,
Хăй ăшĕнче йăл кулать,
Унтан хыттăн хуравлать:
– Ыран тĕнче пĕтет, – тет, –
Тумтир мĕнле кирлĕ? – тет.

1959

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.